ПАТРИОТИЗМ

# Тыл ĕçченĕсене халалласа

**Авăн уйăхĕнче Шупашкарта «Çĕнтерӳ чиккисем» патриотизм марафонĕ старт илчĕ. Ăна Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче тылра ырми-канми тăрăшнă çынсене халалланă. Асăннă марафона Чăваш, Пушкăрт республикисем тата Чĕмпĕр облаçĕ хутшăнаççĕ.**



ЧР Наци библиотекинче «Мухтавлă Раççейшĕн» ятпа пултарулăх каçĕ иртрĕ. Вулавăша пуçтараннă çар тата ĕç ветеранĕсем, культура тата вĕренӳ деятелĕсем валли «Асту. Пĕл. Ан ман» программа хатĕрленĕ. Унта Çĕнтерĕве, геройсен паттăрлăхне халалланă юрăсем янăрарĕç. Уява хутшăннисем Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕн солисчĕсен, тĕрлĕ конкурс лауреачĕсен – Валентина Двойновăн, Константин Москалевăн, Иван Николаевăн, Надежда Степановăн, Мария Михайловăн – илемлĕ сассисене итлесе киленчĕç.

Чăваш халăх поэчĕ Раиса Сарпи Украинăри ятарлă çар операцине хутшăнакан салтаксене халалласа çырнă сăввисене вуларĕ. Пултарулăх каçĕ Ютăн «За Россию» юррипе вĕçленчĕ.

**Вера АРХИПОВА.**

Автор архивĕнчи сăн ӳкерчĕк.